

# С. М. МАКСИМОВ

(Çуралнăранпа
100 çул
çитнĕ май)

Композитор-фольклорист, музыка педагогĕ, общество деятелĕ Степан Максимович Максимов — чăвашсен профессиллĕ музыкин никĕсне хывакансенчен пĕри.

Вăл 1892 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче хальхи Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашра çуралнă. Унтах икĕ класлă шкул пĕтерсен, 1907—1911 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Унăн музыкăллă пултарулăхне аталантарма, И. Я. Яковлев тăрăшнипе, Чĕмпĕрте ĕçленĕ вырăс музыкантсем пулăшнă. Иван Яковлевич ăна хăйĕн шкулĕнчех хăварнă: С. Максимов ачасене сĕрме купăс калама вĕрентнĕ, хĕлĕхлĕ инструментсен оркестрне ертсе пынă, юрă учителĕ пулнă. 1914 çулта вăл юрă учителĕн ятне илме Хусанти музыка училищинче экстерн йĕркипе экзамен тытать. 1930—1935 çулсенче Мускаври консерваторире вĕренет, А. Н. Александров профессор ертсе пынă композици класне пĕтерет. Чăваш хушшинче аслă пĕлӳ илнĕ пирвайхи композитор пулнă вăл.

Максимов педагог Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче (1911—1925), Чĕмпĕр уесĕнчи Тимĕрçелти пуçламăш шкулта (1919—1921), Шупашкарти музыка шкулĕнче (1926 çултанпа), музыка училищинче (1929—1930, 1935—1937) ĕçленĕ. Вăл чăваш шкулĕсенче вĕренекенсем валли юрă кĕнекисем («Чăваш кĕввисем», «Революци юррисем», «Шкул юррисем»), «Музыка çыруне вĕренмелли кĕнеке» кăларнă. Г. Хирбю, Ф. Лукин, А. Орлов-Шуçăм, В. Ходяшев, А. Токарев, Ф. Васильев композиторсене тата ытти вуншар музыканта С. Максимов вĕрентнĕ. Вăл республикăри музыка культури валли наци кадрĕсем хатĕрлес ĕçе пуçаракансенчен пĕри.

Чăваш халăх музыкине пухакан, ăна тĕпчекен, пропагандăлакан деятель пулнă С. Максимов. Ку тĕлĕшпе ăна çитекенни урăх пулман та. Фольклорист малтанхи тапхăрта ытларах анатри чăвашсен юррисемпе интересленет. Шупашкара пурăнма куçсан вара республикăн çурçĕр районĕсем тăрăх çӳрет, унта пухнă материалсене «Тури чăвашсен юррисем» (1932), «Гаврил Федоров юрласа панă 146 юрă» (1934) кĕнекесенче пичетлет. Тĕлĕнмелле чаплă юрăçа — Гаврил Федорова тупса, унăн 600 ытла юррине çырса илет С. Максимов. Эпир ăна пĕр çавăншăн кăна ĕмĕр тав туса пурăнма тивĕç.

Композитор хăй пухнă юрăсене (икĕ пине яхăн) тата темиçе кĕнекепе пичетлесе кăларма хатĕрленнĕ. Анчах та çав кĕнекесене хăй виличчен алла тытса кураймарĕ. Юлашки сборникĕ («Чăваш халăх юррисем») Мускавра 1964 çулта тухрĕ, унта «Чăваш халăх юрри» ятлă тĕпчев статйипе тата 320 юрă кĕртнĕччĕ. Вăтăрмĕш çулсенче И. Люблинпа, В. Кривоносовпа пĕрле хатĕрленĕ «Чăваш халăхĕн юрă творчестви» монографи те интереслĕ пулмаллаччĕ (унта 450 юрă кĕртнĕччĕ). Шел, ăна ку таранччен те кăлараймарĕç-ха.

Хăй пухнă халăх юррисенчен чылайăшне композитор хорпа е пĕччен юрлама илемлетнĕ (1917 çултан пуçласа). Вĕсенчен чи паллисем: «Ака-суха юрри», «Атьăр, хĕрсем вылямa», «Вĕç, вĕç, куккук», «Ан авăн, шĕшкĕ», «Пирĕн атте — сазан пул», «Анатран хăпарать шурă пăрахут», «Уй варринче», «Юри кайрăм», «Çăлтăр витĕр», «Шăнкăр кăна», «Мулкач юрри». Çĕнĕ пурнăç темипе çыхăннă массăллă юрăсем те пур: «Çăпата», «Хутлам-хутлам хуткупăс», «Çуллахи пек», «Колхозниксен ĕç юрри» т. ыт. те. Пысăк формăллă сочиненисенчен чи малтан симфони оркестрĕ каламалли Увертюрăна тата фортепьянăпа каламалли Сонатинăна асăнмалла (иккĕшне те 1935 çулта çырнă).

С. М. Максимовăн пархатарлă ĕçне 1937 çул вĕçĕнче путлантарнă: композитора, буржуаллă националист тесе, вунă çуллăх тĕрмене хупнă. Çапла 1956 çулччен унăн ятне халăхра асăнман, юррисене юрламан.

Коммунистсен партийĕн членĕ (1919), СССР композиторсен союзĕн членĕ (1933), Чăваш АССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ (1934) пулнă Степан Максимович Максимов. Вăл Шупашкарта 1951 çулхи августăн 26-мĕшĕнче вилнĕ. Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ музыка шкулĕ тата пĕр урам унăн ячĕпе хисепленеççĕ.

Ю. ИЛЮХИН